Муркаш район хаçачě

# Çěнтерÿ ялавě

1944 çулхи çу уйăхěн 5-мěшěнчепе тухать

78 (8239) № * Шăмат кун, 2014 çулхи юпа (октябрь) уйăхěн 11-мěшě * Хакě ирěклě

## Спорт çынсене çывăхлатать



***Октябрěн 9 – 10-мěшěсенче Чăваш Республики çěр-шыври спорт аталанăвěн центрě пулса тăчě. Кунта "Раççей – спорт çěр-шывě" Пěтěм тěнчери форум, РФ Президенчě çумěнчи Физкультурăпа спорта аталантарас енěпе ěçлекен канаш ларăвě иртрě. Республикăна Раççей Президенчě Владимир Путин, Раççей Патшалăх Думин депутачěсем, федераллă министрсем, регионсен пуçлăхěсем, спорт федерацийěсен ертÿçисем, чикě леш енчи делегацисем килсе çитрěç.***

Малтанхи кунхине Çěнě Шупашкарти Олимп резервěсен ятарлă 3-мěш спорт шкулěнче Раççей Президенчě çумěнчи Физкультурăпа спорта аталантарас енěпе ěçлекен канаш ларăвě иртрě. Ăна Владимир Путин ертсе пычě.

Ларура 2016–2020 çулсенче спортăн пурлăхпа техника базине аталантарас, физкультурăпа спорт мероприятийěсен тытăмне лайăхлатас ыйтусене сÿтсе яврěç.

Раççей Президенчě Владимир Путин ларăва уçса массăллă спорта аталантарни пěлтерěшлě пулнине палăртрě. Паянхи кун Пěтěм тěнчери утмалли кунран пуçланни савăнтарчě. Çакнашкал мероприяти пирěн çěр-шывра пěрремěш хут. Ăна хăвăрт утас енěпе палăрнă республикăра иртнерни – уйрăмах пěлтерěшлě, терě вăл.

Президент çěр-шывра спортпа туслисем 2020 çул тěлне 40 процентран кая мар пулмаллине палăртрě. Халě вěсем – 27,5 процент.

Докладсемпе Раççей спорт министрě Виталий Мутко тата Раççей вěренÿпе наука министрě Дмитрий Ливанов тухса каларěç.

Чăваш Ен Пуçлăхě Михаил Игнатьев хăйěн сăмахěнче физкультурăпа спорт çамрăк ăрăва пăхса ÿстерессинче витěмлě хатěр пулнине палăртрě. Вăл республикăра спортăн аталаннă инфратытăмне туса хунине, юлашки çулсенче 50 ытла спорт объектне хута янине пěлтерчě. Кашни район центрěпе хула округěнче хальхи спорт комплексěсем ěçе кěртнě. Михаил Игнатьев физкультурăпа спорт сывлăха çирěплетме май панине, республикăра демографи лару-тăрăвě лайăхланнине, юлашки виçě çулта халăх йышě ÿснине палăртрě.

Раççей Президенчě Владимир Путин республикăри демографи лару-тăрăвне кунта йышăннă комплекслă мерăсем – сывлăх сыхлавěн сферинче, социаллă политикăра, физкультурăпа спорт облаçěнче – лайăхлатма пулăшнине палăртрě. Владимир Путин Михаил Игнатьева республикăра физкультурăпа спорта аталантарма пысăк тимлěх уйăрнăшăн тата хăйěн тěслěхěпе çамрăксене спорта явăçма хавхалантарнăшăн тав турě.

Çав кунах Çěнě Шупашкарти "Сокол" Пăр керменěнче "Раççей – спорт çěр-шывě" Пěтěм тěнчери пиллěкěмěш форум ěçлерě. Вăл "Спортри пěрлěхре – тěнче тăнăçлăхě: пěтěм ěççен стратегийě" девизпа иртрě. Мероприятие Раççейри тата 20 çěр-шыври физкультурăпа спорт облаçěнчи 2 пин ытла специалист хутшăнчě.

Раççей Президенчě Владимир Путин форума хутшăнакансене саламласа Раççей çěр-шывра спорта аталантарассипе нумай тунине палăртрě, вăл тěнче шайěнче те сулмаклă вырăн йышăнассине каларě. Спорт çынсене хутшăнма, çывăхланма майсем туса парать, терě вăл.

Раççей спорт министрě Виталий Мутко форум масштаблă мероприяти пулнине каларě. Вăл пирěн республикăна ертсе пыракансене тав туса Чăваш Ене çак форума ирттерме ăнсăртран суйласа илменнине палăртрě. Юлашки çулсенче республика палăрăмлă утăмсемпе аталанать. Кунта пурлăхпа техника бази лайăхланать. Спорта явăçакан çынсен хисепě ÿсет. Кунта массăллă физкультурăпа спорта йěркелеме хальхи нумай çěнě технологипе усă кураççě, терě вăл.

Ларура физкультурăпа спорт патшалăх политикин малашлăхлă тěллевě пулнине палăртрěç. Юлашки вăхăтра ГТО комплексне çěнетме йышăннă, спорт объекчěсем тума пысăк укçа-тенкě хываççě, анлă проектсем вăя кěртеççě. Массăллă физкультурăпа спорта аталантарасси, çамрăксене явăçтарасси пирки ларура пěрре мар каларěç.

**Форум зарядкăран пуçланчě. Ăна Раççей телеканал ěçченě Дмитрий Губерниев ертсе пычě. Унта пиншер çын хутшăнчě. Ирхи зарядка спортсменсен парачěпе вěçленчě.**

**Унтан Пěтěм тěнчери утакансен кунě старт илчě. Шупашкар заливěн çыранě тăрăх 15 пин ытла çын утса çаврăнчě. Вěсен йышěнче – Олимп тÿпине çěкленнě спортсменсем, çамрăксем, ача-пăча, ватăсем.**

**Тěп хулари Хěрлě тÿремре спортпа çыхăннă Пěтěм тěнчери куравсемпе экспозицисем ěçлерěç. "Хальхи вăхăтри спорт: "Инновацисем тата малашлăх" куравăн тěп теми – спорта пурлăхпа техника тěлěшěнчен тивěçтересси, регионсен опытне тата хальхи вăхăтри технологие çул уçса парасси. Унта çěр-шыври фабрикăсем кăларакан паянхи кун ыйтăвне тивěçтерекен хатěрсене тăратнă.**

**"Спартак" комплексăн стадионěнче Пěтěм Раççейри ГТО комплексěн нормативěсене йышăнмалли пěрлехи кун иртрě. Ку нормативсене пурнăçлама тěрлě ÿсěмри 1000 яхăн çын килнě. Спорт хатěрленěвěн программи 11 ÿсěм категорийěнчен тăрать – 6 çултан пуçласа 70 çултисем тата аслăраххисем валли. Николай Валуев манăçа тухма пуçланă ГТОна чěртсе тăратнине ырларě.**

**Форум вăхăтěнче спортăн тěрлě енěпе ăсталăх класěсем, дискуси сессийěсем иртрěç. Спорт тренерěсем валли триатлон, ирěклě кěрешÿ, çăмăл атлетика, адаптаци спорчě, сěтел çи теннисě, самбо, спорт гимнастики, конькипе фигурăсем туса ярăнас енěпе ăсталăх класěсем йěркелерěç.**

**Форума Муркашсем те хутшăнмасăр тăма пултараймарěç. Вěсен йышěнче район администрацийěн пуçлăхě Ростислав Тимофеев та пулчě. Иван Кабуркин, Аверкий Васильев, Раиса Сафонова, Анна Васильева ветерансем ГТО комплексěн нормативěсене пурнăçлама хутшăнчěç. Çамрăксем зарядкăра пулма та ěлкěрчěç.**

Форум тата унăн виçинче иртнě тěрлě мероприятисем пирки – çитес номерсенче.

### Ыран – Ял хуçалăх ěçченěсен кунě

**АГРОПРОМЫШЛЕННОСТЬ КОМПЛЕКСĚН ХИСЕПЛĚ ĚÇЧЕНĚСЕМ!**

Сире Ял хуçалăхěпе тирпейлекен промышленность ěçченěсен кунěпе чун-чěререн саламлатăп!

Çак уяв хăйсен ырми-канми ěçěпе обществăна пуринчен те ытларах кирлипе – апат-çимěçпе тивěçтерсе тăракан мěн пур çынна пěрлештерет. Пирěн хресченсен ěçченлěхěпе тăрăшулăхне пула халăх лайăх пахалăхлă тата экологи тěлěшěнчен таса апат-çимěçпе çителěклě усă курать.

Çěр ěç отраслěнчи патшалăх политики мěн пур формăллă хуçалăхсене пулăшассине, ěç тухăçлăхне ÿстерессине, тăкаксене чакарассине, ял хуçалăх продукцине тарăннăн тирпейлес ěçе аталантарассине тěпе хурать. Ял хуçалăх таварěсем туса илекенсене патшалăх паракан пулăшу калăпăшě палăрмаллах ÿсрě. Çакă кăçал Чăваш Енри агропромышленность комплексне лайăх çитěнÿсем тума май пачě. Потребитель рынокěнчи лару-тăру ăнăçлă аталанать. Çавна май бизнеса тытса пыма тата агропромышленность комплексěн сферинче инвестицин çěнě проекчěсене пурнăçлама хавхалантармалли хушма майсем йěркеленеççě.

Мěн пур хуçалăхра тыр-пул акса ÿстермелли лаптăк 9,3 пин гектар пысăкланса 558,6 пин гектара çитрě. Тěш-тырăпа пăрça йышши культурăсене çěр ěçченě пěтěмпех пуçтарса кěртрě, 568,8 пин тонна тырă туса илчě. Ку вăл пěлтěрхи кăтартуран 160 пин тонна ытларах.

Пěрлешÿллě хуçалăхсемпе хресчен (фермер) хуçалăхěсенче пěтěмпе 143,4 пин тонна çěр улми туса илчěç. Унăн вăтам тухăçě гектар пуçне 163,7 центнерпа танлашрě.

Суту-илÿ организацийěсен сентрисенче вырăнти продукци ассортименчě анлăланать. Çакă хамăрăн таварсене вырнаçтармалли çěнě рыноксене алла илмелли, туса кăларакан продукцие вырнаçтармалли çулсене уçать.

Чăваш Ен çěр ěçченěсене тăван çěре чунтан юратса тăвакан пархатарлă ěçшěн чунтан тав тăватăп. Хăйсен ěçченлěхěпе, çирěплěхěпе тата юратнă ěçе парăннипе ырă тěслěх пулса тăракан ветерансене уйрăммăн палăртса тав сăмахě калатăп.

Агропромышленность комплексěн мěн пур ěçченне çирěп сывлăх, иксěлми ырă шанăç, телей тата ырлăх сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуçлăхě М. ИГНАТЬЕВ.**

**АГРОПРОМЫШЛЕННОСТЬ КОМПЛЕКСĚН ХИСЕПЛĚ ĚÇЧЕНĚСЕМ ТАТА ВЕТЕРАНĚСЕМ!**

Сире Ял хуçалăхěпе продукци тирпейлекен промышленноçра ěçлекенсен кунě ячěпе ăшшăн саламлатăп.

Агропромышленность комплексě районăн экономикинче пысăк вырăн йышăнать. Кăçалхи ěç кăтартăвěсем те çакна çирěплетеççě.

«Хура çěр – анне кăкăрě», – тенě ватă çынсем. Унпа тухăçлă ěçлеме пěлсен вăл пире тăрантарать. Çакна тěпе хурса ěçлеççě те ěнтě Муркаш тăрăхěнчи хресченсем. Малашлăхпа пурăнакан ял çыннин хěлле те, çулла та, çуркуннепе кěркунне те алă усса ларма вăхăт çук.

Уй-хирте, фермăра вăй хуракансен ěçě кирек хăçан та çăмăл пулман. Эсир тавар туянакансене пысăк пахалăхлă, экологи тěлěшěнчен таса апат-çимěçпе тивěçтеретěр.

Тăван ен аталанăвěшěн, унăн мухтавěшěн вăй-халне шеллемесěр тăрăшнă тата тăрăшакан ентешěмěрсене чěререн тав сăмахě калас килет. Сирěн пултарулăх, чăтăмлăх, тăван çěре юратни Муркаш районне вăхăтпа пěр тан утма пулăшать.

Пурне те сире çирěп сывлăх, ěçре çитěнÿсем, тулăх пурнăç тата çемьере ăнăçу сунатăп.

**Район администрацийěн пуçлăхě Р. ТИМОФЕЕВ.**

### Уяв умěнхи интервью

## Уй-хир ěçě яваплăх ыйтать

***Ěнер кăна çур акине тухнă пекчě. Сисмерěмěр те – кěр аки те иртсе кайрě, вырма ěçěсем те вěçленчěç. Умра – ял хуçалăхěпе продукци тирпейлекен промышленноçра ěçлекенсен уявě. Мěнле кăтартусемпе кěтсе илет-ха ăна районти хресчен? Çак ыйту çине хурав шыраса эпир район администрацийěн пуçлăхěн пěрремěш çумěпе – экономикăпа АПК аталанăвěн тата муниципаллă пурлăх управленийěн ертÿçипе В. АНАНЬЕВПА тěл пултăмăр, хăш-пěр ыйтусем çине хуравлама ыйтрăмăр.***

**– Владислав Кириллович, ял хуçалăхěпе продукци тирпейлекен промышленноçра ěçлекенсен кунне тата çитес эрне кун райцентрта иртекен Тыр-пул уявне пирěн çěр ěçченě мěнле ÿсěмсемпе кěтсе илет-ха?**

– Яваплăха туйса ěçленěрен пирěн хресчен кăçал уй-хир ěçěсене йăлтах агронаука ыйтнă пек вăхăтра вěçлерě. Çавăнпа та вăл паян тулли кěлетсемпе тата ытлă-çитлě хатěрленě выльăх апачěпе хěл куçěнчен пăхать. Çěнě технологипе, малта пыракан опытпа усă курса ěçленě хуçалăхсем кăçал ÿсěм çулě çине тухрěç. 9 уйăх хушшинче районти ял хуçалăх предприятийěсем пěтěмпе 357 миллион тенкěлěх продукци туса сутма пултарчěç. Танлаштаруллă пăхсан ку калăпăш иртнě çулхи ěç кăтартăвěн 114 процентěпе танлашать.

Тыр-пул тухăçě пирки калас пулсан кăçал ăна районěпе гектар пуçне 20,1 центнер туса илсе ампарсене 30,6 пин тонна çěнě тырă кěртсе хутăмăр. Кунсăр пуçне обществăлла выльăх-чěрлěхе тухăçлă хěл каçарма та апат ытлă-çитлě янтăлама пултартăмăр. Тěрлě харпăрлăх формиллě хуçалăхсем гектар пуçне вăтамран 149,9 центнер "иккěмěш çăкăр" кăларса 4,8 пин тонна управа хучěç.

**(Вěçě 2-мěш стр.)**

**26 октября 2014 года, воскресенье, проводится осмотр пациентов врачом-офтальмологом МНТК «Микрохирургия глаза» им. академика С.Н. Федорова в оптике «Гранд».**
**Адрес: с. Моргауши, ул. Мира, д. 15.**
**Запись по тел.: 8-967-475-87-57.**

Уяв умĕнхи интервью

# Уй-хир ĕçĕ яваплăх ыйтать

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)

**– Ку кăтартусем пире тивĕçтерессĕ-и?**

– Ку ыйту çине икĕ тĕрлĕ те хуравлама пулать. Мĕн акни-лартни паян хире юлманни тата пĕтĕмĕшле тухăç иртнĕ çулхинчен те ўсĕмлĕрехех енчен пăхсан пурнăçланнă ĕçсемшĕн савăнмалла. Анчах уй-хир ĕçченĕ паян пĕр енлĕрех çула суйласа илни енчен пăхсан, çиччĕ виççе шутламалли те çук мар. Тĕслĕхрен, çĕр улми, выльăх кăшманĕ туса илесси иккĕмĕш вырăна тухни пире чыс тумасть. Çакăнта пĕрлешўллĕ кооперативсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсем çитес çулхи уй-хир ĕçĕсен планне хатĕрленĕ чух пуçаруллăрах пуласса шанас килет.

**– Тухăç пысăк хуçалăхсене асăнса хăвармăр-ши?**

– Ĕç технологине пăхăнакансен тухăçĕ чăнах та пысăк. Тырă-пулă тухăçĕпе малтисен шутĕнче Суворов яч. хис. (35,5 центнер), Е. Андреев яч. хис. (26 центнер), Ильич яч. хис. хуçалăх (24,8 центнер), Чкалов яч. хис. (23,6 центнер). Районта çакăн пек кăтартусем пулни пирĕн условисенче те тыр-пул туса илессипе тухăçлă ĕçлеме майсем пуррине çирĕплетет.

**– Кĕр аки çине куçар-ха. Çитес çулхи тухăç валли çирĕп никĕс хывса хăварчĕç-и хуçалăхсем?**

– Хресчен ĕçĕ хăйĕн йĕркипе пырать. Çапла вара вăхăт çитсен пирĕн хуçалăхсем çĕр ĕç технологине пăхăнса кĕске вăхăтра 5923 гектар кĕртрисем акса хăварчĕç. Ку вăл иртнĕ çулхинчен 1078 гектар ытларах. Уйрăмах пысăк лаптăк акнисем: "Путь Ильича", Чкалов яч. хис., Суворов яч. хис., Е. Андреев яч. хис. хуçалăхсем (600 – 400 гектар ытла).

**– Ял хуçалăхĕнче ўсен-тăран тата выльăх-чĕрлĕх отраслĕсем – тачă çыхăнура.**

– Хирĕçлеместĕп. 9 уйăхра районти тĕрлĕ категориллĕ хуçалăхсем пурĕ 2458 тонна аш-какай (пĕлтĕрхин 87,4 процентчĕ), 30388,6 тонна сĕт (96,3 процент), 62,7 миллион штук çăмарта туса илнĕ. Çак кăтартусем выльăх апачĕ янтăланипе – апла пулсан ўсен-тăран отраслĕ ĕçленипе – тўрремĕнех çыхăннă тесе калатăп. Кунта паян пире хуçалăхсенче выльăх йышĕ чакни шухăшлаттарать. Апачĕ пуррине кура выльăхсене хушассине малти вырăна кăлармалла. Технологие пăхăнса сысна ĕрчетесси пирки те шутламалла. Аш-какай хакланни çапла тума ыйтать.

Кунта сĕт пуçтарасси пирки те каласа хăварас килет. Мăн Сĕнтĕр тата Муркаш райповĕсем кăçалхи 9 уйăхра халăхран 3908 тонна сĕт пуçтарчĕç. Çакăнта килти хушма хуçалăхсем активлă пулнине палăртмалла.

**– Хресчен (фермер) хуçалăхĕсем те район аталанăвĕнче çирĕп вырăн йышăнчĕç...**

– Çапла пулмалла та. Ял хуçалăхĕнче тĕрлĕ харпăрлăх формиллĕ хуçалăхсем аталанма тата ырă тĕслĕх кăтартма пуçланине ырламалла. Нумай чухне вĕсен ĕçне пирĕн тĕслĕхе илме те юрамалла. Мĕншĕн тесен вĕсем хăйсен харпăрлăхĕпе, малта пыракан опытпа тухăçлăрах та усă кураççĕ, çĕнĕ технологисемпе усă курса пĕрешкел условирех ытларах çитĕнўсем тăваççĕ. Акă кăçал Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи Л. Волковăпа Д. Пайков тата Ильинка ял тăрăхĕнчи В. Косарев хăйсен хуçалăхĕсене аталантарма грантсем çĕнсе илме пултарчĕç.

**– Патшалăх пулăшăвĕпе усă курасси хуçалăхсенче еплерех?**

– Çўлерех каланă ĕçсемпе ĕç кăтартăвĕсем патшалăх пулăшăвĕ вырăнлă пулнипе çыхăннине уйрăммăн палăртатăп. Кăçалхи 9 уйăхра районти агропромышленность предприятийĕсем тĕрлĕ бюджетран 71678 пин тенкĕ укçа илчĕç. Патшалăх пулăшăвĕпе уйрăмах нумай усă курнисем: "Путь Ильича" (19361 пин тенкĕ), Суворов яч. хис. (3789 пин тенкĕ), Ильич яч. хис. (2801 пин тенкĕ), "Моргаушская" чăх-чĕп фабрики (2225 пин тенкĕ), "Герой" (1954 пин тенкĕ) т. ыт. те. Çĕнĕ тĕллевсемпе ĕçлекенсем патшалăх пулăшăвĕпе малашне те çителĕклĕ усă курасса шанатăп.

Пурне те уяв ячĕпе!

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

# Кунта ура çинче çирĕп тăраççĕ

Агробизнес вăй илет

«Путь Ильича» агрофирмăра ўсен-тăранпа выльăх отраслĕсем – тачă çыхăнура. Уй-хир ĕçченĕсем фермăра ĕçлекенсем валли çу каçа 5000 тонна паха силос тата 2000 тонна сенаж янтăласа пама та ĕлкĕрнĕ. Çавăнпа та паян ĕне пуçне талăксерен вăтамран 13 кг сĕт сăвакан ĕçченсем хĕллехи рацион çине куçсан кăтарту ўсессе шанаççĕ.

Паян хуçалăхра 850 пуç мăйракаллă шултра выльăх. Вĕсенчен 378-шĕ – сумалли ĕнесем.

– Пирĕн производство хăвачĕпе çакă çителĕксĕррине ăнланатпăр. Çавăнпа та сумалли ĕнесен кĕтĕвне пысăклатма пĕрремĕш пăруламалли тынасен ушкăнне (300 пуçа яхăн) йĕркелерĕмĕр. Кунсăр пуçне пăрусене ўстерес йĕркене те ятарласа пăхса хутăмăр. Çапла вара хамăр агрофирмăна никĕсленĕ чухнехи тĕллевсем патне эпир аякри укçапа мар, хамăр вăйпа аталанса пырас шутлă. Çакна тума майсем пур, – тет агрофирмăн ĕç тăвакан директорĕ А. Воробьев ноябрĕн 1-мĕшĕнчен 200 пуç тăмалли пăру сарайĕ тăвассипе ĕçлекенсем патĕнчен иртнĕ май.

Ирхи сăвăм вĕçленнĕ май доярккăсем киле кайнăччĕ. Апла пулин те выльăх тухтăрĕсем комлексрах. Паллашатăп. **Сăн ўкерчĕкре (сулахайран сылтăмалла): Татьяна Федотова, Надежда Никитина, Калерия Димитриева.**

– Çамрăксем хуçалăха килни савăнтарать, малашлăха пăхтарать. Хамăр хушăра туслă та килĕшўллĕ ĕçлени хавхаланăва çĕклет, – терĕ 1981 çулта Вăрнарти ял хуçалăх техникумĕнчен ветфельдшера вĕренсе тухнăранпа пуян опыт пухнă Калерия Петровна. Паян вăл осеменатор ĕçĕсене туса пырать.

Сарайран сарай патне иртнĕ чух





çумри ем-ешĕл тумлă хирсем куçран каймарĕç. Çапла вара ертўçĕпе унта та çаврăнса тухрăмăр. Паянхи кунпа пурăнассинчен иртнĕскерсем кĕрхи культурăсене 720 гектар акса хăварнă. Кунта та çĕнĕлĕхпе тĕл пултăм. Хуçалăх эксперимент шучĕпе 130 гектар çине ырашпа кĕрхи вика тата клевер акса хăварнă.

Юнашар хирте вара ХТЗ-17221 тракторпа Виталий Иванов **(2-мĕш сăн ўкерчĕкре)** кĕрхи çĕртме тăвать. Хастар механизатор кăçалхи çур акире 664 гектар, кĕр аки валли 500 гектара яхăн çĕр хатĕрленĕ. Çулла вара пĕр чарăнми выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçре тăрăшнă. "Такамшăн ĕçлеместпĕр-çке", – терĕ Виталий Григорьевич кабинăна кĕрсе ларса трактора вырăнтан хускатнă май.

**А. БЕЛОВ.**

**Автор сăн ўкерчĕкĕсем.**

# П. ЕФИМОВ: "Кĕлет пуянни çĕнĕ тĕллев çуратать"



***Çуллахи кунсем хыçа юлнă тата кĕрхи уй-хир ĕçĕсене вĕçленĕ май çĕр ĕçченĕ иртсе пыракан çулталăка тишкерсе малтанхи пĕтĕмлетўсем тăвать. Ăнăçуллă ĕçленисем çитес эрнере хаваспах тыр-пул уявне тухĕç. Тăрăшуллă ĕçчен ăна тивĕç те! Çу кунĕсемпе вырма ĕçĕсене çанă таварса ирттернисен паян кĕлечĕсем те тулли, выльăх-чĕрлĕхĕ те таса, вĕсем валли хĕл каçмалăх апачĕ те ытлă-çитлĕ, хирте ĕçленĕ ял хуçалăх техники те хĕллехи управра. Апла пулсан тĕплĕ тишкерў туса çитес çулхи ĕçсем пирки çиччĕ виççе пăхмалли меллĕ вăхăт. Çак шухăшсемпе пырса кĕтĕм те эпĕ Чкалов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн ертўçи Павел ЕФИМОВ*** (пĕрремĕш сăн ўкерчĕкре) ***патне.***

**– Павел Геннадьевич, сире çулталăкăн кирек-хăш вăхăтĕнче те хирте, выльăх-чĕрлĕхферминче курма пулать. Апла пулсан хуçалăхри ĕç-хĕле çирĕп тĕрĕслесе тăратăр? Çакăнтан пуçланать пулĕ вăл экономика тĕрекĕ?**

– Исетерккĕсен усă курмалли çĕрсен пĕтĕмĕшле лаптăкĕ 1050 гектар. Вăл шутран сухаламалли пусăсен виçи – 603 гектар. Çак лаптăксем çулталăк тăршшĕпех пушă е çум курăкĕ айĕнче выртмарĕç. Апла пулсан пирĕн хуçалăх ĕçченĕсем хăйсене шанса панă çĕрпе туллин усă кураççĕ. Çĕр ĕç культурине малта тытас тĕллевпе çур акирен пуçласа хура кĕрчченех пирĕн ĕçченсем хирте. Ўсĕмлĕ малашлăхпа тухăç никĕсĕ шăпах ĕç культуринчен пуçăннине кашни ĕçчен ăнланать. Çапла вара юлашки çулсенче çĕр ĕç культурине мала кăларса ĕçлеме тăрăшатпăр та.

**– Кунта эсир кăçал унччен пĕр çемьере ĕçленĕ Чапаев ячĕллĕ хуçалăхпа малалла пĕр йышра пулас шут тытнине пĕлетĕп. Анчах сире хальлĕхе пĕрлешнĕ хуçалăх тесе калама иртерех пек. Мĕн чăрмантарать пĕр бюджетпа пурăнма?**

– Кашни ĕçĕн вăхăчĕ пур. Çиччĕ виçмесĕр тунă утăм нумай кĕттермесĕрех ĕнсерен пырса çапма пултарать. Çапла ан пултăр, икĕ хуçалăхĕ те йывăрлăхсенчен уйрăмшарăн тухчăр тесе тўрех пысăккăн курăнма тăхтарăмăр. Паянхи куна вырма ĕçĕсене пĕтĕмпех вĕçленĕ, ĕç укçипе парăмсем пĕтнĕпе пĕрех. Умри тĕллев – налуксене тўлесе татасси. Ун хыççăн вара пĕр йышпа ĕçлесси пирки те калаçма юрать. Кăçал икĕ хуçалăхăн хирĕсенче гектар пуçне вăтамран 23 центнер тухăç илсе ампарсене 2033 тонна çĕнĕ «çăкăр» хутăмăр. Кĕлетсем тулли пулни пире паян малашлăха шанчăклăрах пăхма май парать.

**– Паян ял хуçалăхĕнче пĕчĕк вăйпах пысăк ĕçсем пурнăçлама тивет. Апла пулсан кашни ĕçчен уйрăм шут çинче. Çапла мар-и?**

– Ытти уявсемпе пĕрлех хресченĕн те професси кунĕ пурри савăнтарать. Хамăр ĕçченсене пурнăçланă ĕçшĕн вăхăтра тав туни пысăк пĕлтерĕшлĕ тесе шутлатăп. Çавăнпа та Чкалов яч. хис. тата Чапаев яч. хис. хуçалăхсенче çĕр ĕçне аталантарассишĕн, выльăх-чĕрлĕх хунаттарассишĕн тăрăшакансене пурне те уяв ячĕпе саламлатăп. Малашне те ума лартнă тĕллевсене татса пама эпир пĕрле ĕçлессе шанатăп. Умри тĕллевсене пурнăçлама пурне те таса сывлăх, ăнăçу, хавхалану, телей, юрату сунатăп.

Икĕ хуçалăх производствинче паян пĕтĕмпе 42 çын ĕçе тухать. Вĕсенчен кашниех хушнă ĕçре яваплăха туйнăран кадрсем çитменнине çивĕччĕн туймастпăр. Çапах выльăх-чĕрлĕх патĕнче, уй-хир производствинче ĕçлеме хушма вăйсем пулсан хуçалăх ĕçĕсен татах та хăватлăрах аталанма майĕ пур.

Уйрăм ĕçченсем тенĕрен эпĕ паян Б. Никитин, Э. Алексеев, Ю. Скворцов, В. Никифоров, С. Аверкиев, Ю. Тимофеев, И. Федоров механизаторсене, В. Трофимовпа Н. Петров водительсене, Л. Елизаровпа В. Васильев тата Ф. Ефимовпа А. Никитин акаçăсене, Н. Тимофеевăпа Р. Смирнова тата Л. Борисова доярккăсене ырăпа палăртатăп. Çитес çул вĕсен йышĕ хушăнасса шанатăп.

**– Обществăлла выльăх-чĕрлĕх фермисене хĕле хатĕрлессипе мĕнле ĕçсем туса ирттертĕр?**

– Пирĕн хуçалăхра паян мăйракаллă шултра выльăх пĕтĕмпе 280 пуç. Вăл шутра 125 пуç сумалли ĕне. Вĕсене валли çу кунĕсенчех пĕрлехи вăйпа ытлă-çитлĕ апат хатĕрлерĕмĕр. Ĕçне кура – кăтартăвĕ. Паян фермăри кашни ĕнерен талăксерен 12 кг сĕт сăватпăр. Хĕллехи рацион çине тăратсан çак кăтарту ўсессе кĕтме пулать.

**– Кăçал кĕр аки мĕн чухлĕ акса хăвартăр?**

– Уй-хир ĕçĕсене вăхăтра туса пынипе кăçал 550 гектар çинче паха вăрлăхпа кĕрхи культурăсем акса хăварма хевте çитертĕмĕр. Вĕсем хитре шăтса тухни çитес çула шанчăкпа пăхтарать.

**– Выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрлерĕр-и тата?**

– Пирĕн паян обществăлла выльăх-чĕрлĕхе ăнăçлă хĕл каçарма 1200 тонна сенаж, 680 тонна утă, ытлă-çитлĕ тырă, улăм пур. Вĕсем çумне макро-, микроэлементсем хушсан хĕл кунĕсенче те производство уксахлама кирлĕ мар тесе шутлатăп. Чи кирли – хуçалăхра ĕçлекенсен ĕçлес кăмăлĕ пурри.

**– Мĕнех, Павел Геннадьевич, ĕмĕтĕрсем ырă малашлăхлă. Вĕсене пурнăçа кĕртме сире Турри пулăштăр.**

– Тавах. Турри пулăшсан, хамăр тăрăшсан, паян тумалли ĕçе ырана хăвармасан ума лартнă тĕллевсем вăхăтра пурнăçланмалла.

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

**Сăн ўкерчĕкре: эсир сăн ўкерчĕкре куракан Б. Никитин Чкалов яч. хис. хуçалăхра çеç мар, районта та ăста механизаторсенчен пĕри. Хăй суйласа илнĕ ĕçри пĕтĕмĕшле стажĕ унăн 36 çул. Кăçалхи вырмана Болеслав Николаевич ывăлĕпе Олегпа хутшăнчĕ. Ĕç пĕтĕмлетĕвĕпе ашшĕпе ывăлĕн экипажĕ кăçал 1900 тоннăна яхăн тырă çапса тĕшĕлерĕ.**



Раççейри çĕр ĕçĕпе продукци тирпейлекен промышленноçра ĕçлекенсен уявĕ умĕн

# "Мĕн акни-лартнине пухса кĕртме тăрăшрăмăр"



Ыран Раççейре ял хуçалăхĕнче тата продукци тирпейлекен промышленноçра вăй хуракансен профессилле уявне черетлĕ хут паллă тăваççĕ. Йăлана кĕнĕ тăрăх вăл çак уйăхăн иккĕмĕш вырсарни кунĕнче пулать. Уява ку тапхăрта ирттерние чĕпсене кĕркунне шутланипе ăнлантармалла пулĕ.

Муркаш районĕ ял хуçалăх районĕ шутланать. Çавна май уяв умĕн эпĕ "Герой" хуçалăх ертӳçипе Галина Ивановăпа **(пĕрремĕш сăн ӳкерчĕкре)** тĕл пулма васкарăм. Вăл асăннă хуçалăхра 1992 çулта бухгалтерта ĕçлеме пуçланă, каярах тĕп бухгалтерта, 2012 çулта ăна хуçалăх тилхепине тытма шаннă. Паянхи калаçура Галина Никитична хуçалăх ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарма кăмăл турĕ.

– Ял хуçалăхĕнче вăй хуракана та уйрăм уявпа чыслани питĕ кăмăллă. Тĕп ĕçсене вĕçлерĕмĕр, çĕре вăхăтра шуратса хăварма, мĕн акни-лартнине тăкаксăр пухса кĕртме тăрăшрăмăр. Пĕтĕмĕшле илсен пирĕн хуçалăх çултталăкри хĕрӳ тапхăра япăх мар кĕтартупа вĕçлерĕ.

700 гектар çинчи тыр-пула вăхăтра вырса кĕртрĕмĕр, тухăç шайĕ 1,5 пин тоннăпа танлашрĕ. Тупăш илесси иртнĕ çулхинчен пысăкрах пулчĕ. Кăçал тырă типĕтмелли çĕнĕ агрегат туянтăмăр. Çанталăк улшăнса тăнине кура ку агрегат пурри питĕ пулăшрĕ пире тыр-пул вăхăтра типĕтсе кĕртме. Ытларах пайне хуçалăх нуши валли хăвартăмăр, ыттине ку тăрăхри çынсем туянчĕç.

Тырă-пулă пухса кĕртес ĕçре уйрăмах тăрăшулăхпа палăрнă Владимир Никифоровпа Владимир Степанов комбайнерсене ырăпа асăнас килет. Ял хуçалăх культуринчен пысăк тухăç илессинче вара уй-хире вăхăтра тата технологие пăхăнса пахалăхлă хатĕрлени пĕлтерĕшлĕ. Çак ĕçре уйрăмах Алексей Иванов, Николай Ефимов, Валерий Васильев механизаторсем, Владимир Федоров, Михаил Плюхин водительсем ырми-канми тăрăшнине палăртас килет. Уй-хир ĕçченĕсем йышлăн мар, тăрăшуллă вĕсем, çавăнпа та кашни çынна ятран асăнам: Вера Малеева, Алина Иванова, Лидия Сорокина, Лира Бурцева, Лиза Григорьева, Оля Кузьмина. Тыр-пула шута илекен Антонина Леонтьева тата складри ĕçе йĕркелекен Валентина Соловьева тăрăшулăхĕ пысăк. Уй-хир ĕçĕсене Сергей Тимофеев управляющи ăнăçлă йĕркелесе пырать. Юсавлă техника кăна ака-сухана хутшăнма тата хуçалăх экономикине аталантарма пултарать. Валерий Андреев инженер вара ку енĕпе ăста специалист шутланать. Çурхи тата кĕрхи ĕçсен тапхăрĕнче тӳлевсĕр апатлантаратпăр.

Ферма тавраш кирлĕ чухлĕ улăм турттартăмăр. Выльăх апачĕ хĕле валли çителĕклĕ хатĕрлерĕмĕр, 2300 тонна сенаж, 180 тонна утă янтăларăмăр.

Çĕр улми тăхăр гектар лартса ӳстертĕмĕр, йăлтах пуçтарса кĕртрĕмĕр. Пĕр гектар пуçне тивекен тухăç 150 центнерпа танлашрĕ, çакă та иртнĕ çулхинчен пысăкрах. Çĕр улми пуçтарас ĕçре хуçалăха Шурча тата Калайкасси шкулĕсенчи коллективсем пулăшрĕç. Самантпа усă курса тăрăшуллă вĕренекенсемпе учительсене пысăк тав сăмахĕ калатăп.

Кĕрхи культурăсене 250 гектар çинче акса хăвартăмăр, иртнĕ çул 150 гектар пулнă. Халĕ çĕртме сухи тăваççĕ, çавăн пекех акана тата вырмана хутшăннă техникăна хĕллехи управа лартассипе тимлеççĕ.

Çанталăк çумăрлă пулнипе вара хăш-пĕр ĕç каярах та юлса пычĕ. Апла пулин те уй-хире йăлтах пушатрăмăр. Пĕтĕмĕшле илсен кăçалхи тăхăр уйăха хуçалăх тупăшлă вĕçлерĕ.

Кĕтӳри выльăх йышне пĕр шайрах тытма, ку енĕпе тĕллевлĕ ĕçлеме тăрăшатпăр. Хальхи тапхăр тĕлне хуçалăхри майракалла шултра выльăх йышĕ 380 пуç, вăл шутра 176-шĕ сумалли. Иртнĕ çулхинчен ытларах сĕт суса илме пултартăмăр, малашне те сăвăма çак шайрах тытма тăрăшăпăр. Пысăк тупăш паракан ĕнешĕн патшалăх субсиди уйăрать, çултталăкне пĕр ĕне пуçне 4 пин те 200 тенкĕ тивет. Çавăн пекех сутлăха ăсатнă кашни литр сĕтшĕн те субсиди параççĕ. Выльăх-чĕрлĕх отраслĕне вара Вероника Степанова заведующи ăнăçлă йĕркелесе пырать.

Ресурс перекетлеме май паракан инноваціллĕ технологие алла илме тăрăшатпăр. Ĕçре çак мелпе усă курнин тĕп тĕллевĕ – пĕчĕкрех тăкаксемпе пысăкрах тупăш илесси. Çакăнта чи малтанах нумай операциллĕ агрегатсем материал, ĕç тăкакне, çын ресурсне перекетлеме май панине асăнмалла. Ку вăл – йăлтах паянхи кун ыйтăвне тивĕçтерни. Кăçал эпир культиватор туянма пултартăмăр. Çитес вăхăтра выльăх апачĕ валеçекен агрегат кӳрсе килмелле. Хуçалăхри чылай ĕç пурнăçлама пире Россельхозбанк уçă акционерлă общество филиалĕн хушма офисĕпе тачă çыхăну тытни пулăшать. Çӳлерех асăннă тырă типĕтмелли агрегат тата сĕрмелли-çунтармалли материал туяннă чухне те вĕсем патне çул тытрăмăр. Утилизаци программи вăйра тăнă май тиев турттармалли çĕнĕ самосвал кӳрсе килтĕмĕр.

Хурт-хăмăр отраслĕн аталанăвĕ те кура рăмлă. Утар ĕçне Владимир Михайлов йĕркелет. Кăçал вăл продукци иртнĕ çулхинчен ытларах илме пултарчĕ.

Хуçалăхра 69 çын вăй хурать. 9 уйăхри вăтам ĕç укçи 11 пин те 700 тенкĕпе танлашать, иртнĕ çул 8 пин тенкĕ ытла пулнă.

Ял хуçалăхĕпе тачă çыхăннă ĕçченсене, вăл шутра ачасене те, тивĕçлĕ канăва тухнисене те пысăк тав сăмахĕ калатăп, ырлăх-сывлăх сунатăп. Паллах, кашни ĕçчене кунта ятран асăнма май çук, пурте вăй-хал çитнĕ таран тăрăшаççĕ. Ял хуçалăхĕ тĕрлĕ отрасле пĕрлештерет. Тĕллеве вара пурин те пĕрре – паян ĕнерхинчен тупăшлăрах, ыран паянхинчен ăнăçлăрах тимлесси.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА калаçнă.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Валерий Геннадьевич Андреев инженер хуçалăхра 2012 çултанпа тимлет, тăрăшулăхпа палăракан специалист хăй тивĕçне тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлать (сулахайран сылтăмалла). Алексей Николаевич Иванов механизаторăн хуçалăхри ĕç стажĕ самай пысăк, вăл ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăрать.**




# Аталанать фермер хуçалăхĕ

Патшалăх шайĕнче пĕчĕк тата вăтам предпринимательство субъекчĕсене тĕрев парас тĕллевпе тĕрлĕ программа вăйра тăрать. Акă черетлĕ траншпа РФ Правительствин кăçалхи март уйăхĕнчи 476-р номерлĕ хушăвĕпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикине федераци шайĕнчен 142 миллион тенкĕ куçнă. Ăна пĕчĕк тата вăтам предпринимательствăна аталантарассинче усă курма палăртнă.

Асăннă категорие пулăшу парассин программи шайĕнче 2012 çулта Çатракасси ял тăрăхĕнчи Радислав Грачев пĕр миллион та çĕр пин тенкĕлĕх грант тивĕçрĕ. Çавна май фермер хуçалăхĕн аталанăвĕ курăмлă пуласса шанса унăн ĕçĕпе паллашма васкарăм, грант-





па мĕнле усă курнипе кăсăклантăм.

– Паллах, пулăшу вăл питĕ лайăх, çакă пире татах та ытларах тимлеме хистет, пысăк ответлăха кĕртет. Ĕçе тулли шайра йĕркелесе ярас пулсан вара нумай тăкакланма тивет. Акă сĕт блокĕ, 25 пуç выльăх тăмалăх çĕнĕ сарай турăмăр,– паллаштарать хуçалăх ĕçĕпе Радислав Алексеевич.

Çак объектсене çĕклеме хуçалăх пĕр миллион та тăхăр çĕр пин тенкĕ тăкакланă. Çавăн пекех нумаях пулмасть апат упрамалли сарай тунă. Грант условийĕпе килĕшӳллĕн ик çĕр пин тенкине пурăнмалли çурт-йĕр условине лайăхлатма параççĕ, унпа та тĕллевлĕн усă курнă фермер.

Хуçалăх ертӳçи ĕне шутне ӳстерессипе тĕллевлĕ ĕçлеме тăрăшать. Паянхи кун тĕлне сумалли ĕне шучĕ 10 пуç, çитес вăхăтра 25 пуç тăмалăх сарай тулли пуласса шанăпăр. Унсăр пуçне ытти выльăх та ĕрчетеççĕ хуçалăхра. Сăвăм валли икĕ аппаратпа усă кураççĕ. Хальхи вăхăтра талăкра пĕр ĕнерен вăтамран 11 литр сĕт туса илеççĕ. Хатĕр продукцие ăста ăсатнипе кăсăклантăм.

– Сĕтĕн те сутатпăр, тăпăрчă та тăватпăр. Сĕт юр-варне çийĕнчех тирпейлемелле, унсăрăн пахалăхĕ те япăхать тата черетлĕ сăвăм валли пушă хатĕр те кирлĕ. Республика тата ун тулашĕнче продукци туянакан яланхи клиентсем пур, – калаçăва тăсрĕ вăл.

Фермер хуçалăхне йĕркеленĕ май вицĕ ĕç вырăнĕ туса панă, ку та çӳлерех асăннă условипе килĕшӳллĕн пурнăçланать. Çавăн пекех ача-пăча тĕкки те сисĕнет.

Йышлă выльăх валли çĕр лаптăкĕ те пысăк кирлĕ. Хальлĕхе 6 гектар çĕр лаптăкне арендăна илнĕ, 4-шне харпăрлăха куçарнă. Пĕр гектар çинче кăшман ӳстереççĕ, ытти лаптăкĕ – нумай çул ӳсекен курăк валли. Выранти ял хуçалăхĕ маларах усă курнă сарайпа тата хăшпĕр ытти хуралтăпа усă кураççĕ фермерсем. Хĕле валли апат çителĕклĕ хатĕрлеме тăрăшать кунти коллектив. Хуçалăх ертӳçи тырă тата витаминлă тĕрлĕ ӳсĕнтăш аякран кӳрсе килет. Тăкак шайĕ пысăкки аванах курăнать. Çулталăка мĕнле кăмăл-туйăмпа вĕçлеме палăртнипе кăсăклантăм.

– Тупăш çулĕ çине тăма питĕ йывăр. Малтанласа шутланă тăрăх çулталăк тупăшлă вĕçленмелле.

Çапла вара ĕçлекен çынна ĕç чăннипех те юратнине ĕнентĕм, çавăн пекех тăрăшуллă Грачевсен пушă вăхăт пачах та çуккине ăнлантăм. Вĕсем – ĕне сăвакансем те, выльăх тухтăрĕсем те тата ытти те. Çапах та кирек епле хĕрарăмшăн та чечек чун уççи вырăнĕнче. Ĕçпе тиеннĕ пулин те, ертӳçĕ мăшăрĕ Лилия Николаевна картишне тĕрлĕ чечекпе илемлетме вăхăт тупнă, кĕр кунĕнче те кунта хăйне майлă илемлĕх сисĕнет.

**Р. МАКАРОВА.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: хуçалăх ĕçченĕ Геннадий Кириллов картишĕнче тимлет; хуçалăх ертӳçи Радислав Алексеевич тата унăн мăшăрĕ Лилия Николаевна.**

# "Моргаушская" МСО – шанчăклă партнер

## Аталану çулĕпе пыракан коллективра



"Моргаушская" МСОра телейĕме тупрăм", – йăл кулă парнелерĕ 87 çулхи М. Хошкин асăннă предприятин паянхи ертӳçинчен В. Семеновран уяв парни илнĕ май.

Пурнăçăн кирек-хăш тапхăрĕн илемне те курма-туйма пултаракана чăннипех телейлĕ теессĕм килет манăн. Пирĕн хушăмăрта вара малашлăхпа пурăнакан çавăн пек çынсем пĕрре мар тĕл пулаççĕ. Вĕсем хăйсен пурнăçĕпе, пултаруллă ĕçĕ-хĕлĕпе паянхи çамрăксемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăраççĕ, ыттисене те пурнăç илемне курма тата унпа туллин киленме вĕрентеççĕ.

– Тавах сире пире манманнишĕн, аслă ăрурисем пурнăçланă ĕçе хисеплесе вĕсен пурнăçĕпе кăсăклансах тăнишĕн. Эсир килсе çӳрени пирĕн пурнăç хăватне ӳстерет, ыранхи куна шанса тата çамрăксен малашлăхне ĕненсе пурăнма хавхалантарать тата кун-çула тăсать, – эпир пӳрте ура ярса пуссан савăнăçне пытараймарĕ пирĕн ума çитсе тăнă ветеран. Юнкăра пурăнакан, чĕрĕк ĕмĕр ытла хуçалăхсем хушшинчи "Моргаушская" строительство организацийĕнче экскаваторщикран пуçласа йывăр машинăсен механикĕ, производство пуçлăхĕ таран ӳссе çитнĕ 87 çулхи Михаил Иванович Хошкин – паян ку тăрăхри ятлă çынсенчен пĕри. Хăйĕн ятне вăл Тăван çĕр-шыва юратнипе-сыхланипе, унăн пуласлăхĕшĕн тимленĕ тăрăшуллă ĕçĕпе, ял çыннисене тата пĕрле ĕçлекенсене ырă суннипе, вĕсене вăй çитнĕ таран пулăшнипе çырса хăварнă.

Пĕтĕм тĕнчери ватă çынсен кунне уявланă май районти кашни ял тăрăхĕпе пур ĕç коллективĕнче те аслă ăрури ĕçтешсене тата ветерансене пурнăçланă ĕçĕсемшĕн чысласа, паянхи пурнăç аталанăвне вĕсем пысăк тӳпе хывнине палăртса, хамăр ятăмăртан ăшшăн саламласа савăнăçлă ларусем, çавра сĕтелсем, ăшă тĕл пулусем сахал мар иртрĕç. Аслă ăрурисен вăрçăри, ĕçри, мирлĕ пурнăçри паттăрлăхне чысласа çав тĕл пулусенче район администрацийĕн яваплă ĕçченĕсем, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, вырăнти депутатсем, хуçалăхсен ертӳçисем нумай тав сăмахĕ каларĕç. Кашнин сăмахĕнчех аслисенчен тĕслĕх илмелли тата вĕренмелли чылай пулни палăрчĕ. Çак ырă енсене хăйсен аслă ĕçтешĕ М. Хошкин строитель патĕнче те, ун хыççăн ял тăрăхĕнчи ĕç ветеранĕсемпе, хуçалăхсем хушшинчи "Моргаушская" строительство организацийĕн аксакалĕсемпе тĕл пулнă чух та район администрацийĕн социаллă ыйтусемпе ĕçлекен çумĕ Лилия Тарасова, "Моргаушская" МСО" хупă акционер обществин генеральнăй директорĕпе Владислав Семеновпа Юнкă ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Валерий Фомин пытармарĕç. Пытармарĕç çеç те мар, вĕсене вăхăтра тăрăшуллă пулнишĕн, мал туртăмлă ĕçленишĕн Юнкă ял тăрăхĕнчи культура ĕçченĕсен тата вырăнти шкулта вĕренекенсен пултарулăхĕпе пĕр пулса пĕр чĕлхерен саламларĕç.

– Ăшă сăмахсем паян кашниншĕнех вырăнлă пулнине ăнланатпăр. Эсир çавна тивĕç те. Вăрçă хирĕнче, аслă стройкăсемпе ырми-канми çĕр ĕçĕнче çĕнсе илнĕ эсир ăна. Çавăнпа та сире чысласси – пирĕн пĕр кунхи ĕç мар. Район администрацийĕ ăна хăйĕн кун йĕркинчен самантлăха та кăлармасть, – терĕ çак куна Юнкăри информаципе культура центрĕнче уявлама хутшăнса район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Л. Тарасова.

Лилия Юрьевна сăмахĕсем çумне "Моргаушская" МСО" хупă акционер обществин социаллă ыйтусемпе пурнăçлакан ĕçĕсене хушсан та вĕсем пĕрпĕринчен нимĕнпе те уйрăлса тăманни куç умне пулчĕ.

– Ватта сума сăвакан хăй те сумлă пулакан. Мăн асаттесемпе асаннемĕрсен çак каларăшне эсир хăвăр пурнăçăрта пĕр самантлăха та иккĕмĕш вырăна хăварман. Çавăнпах эсир паян сумлисен йышĕнче. Сирĕн хавас кăмăл, ăслă канашсем, çамрăксене паракан воспитани мелĕсем пире тăтăшах хăйсем патне туртаççĕ. Сирĕн пурнăç ăслăлăхĕпе ĕç ăсталăхне эпир яланах хамăр алла илме хатĕр. Вĕсене çĕнетсе-аталантарса пуянлатассине эпир хамăрăн паянхи тĕп тĕллевре куратпăр, – терĕ "Моргаушская" МСО" хупă акционер обществин генеральнăй директорĕ В. Семенов хăйсем патĕнче нумай çул вăй хунă ĕçпе вăрçă ветеранне Михаил Хошкина уяв парни тыттарнă май. Ветеранпа çывăхарах паллашсан вăл çакнашкал чыса тивĕçни никама та иккĕлентермерĕ. Кун пирки – уйрăм йĕркепе.

### ТАВ СĂМАХНЕ ТИВĔÇ

...Михаил Иванович 1927 çулхи çу уйăхĕн 30-мĕшĕнче Юнкăра хресчен çемйинче çуралнă. Çĕр-шыв çĕнĕ аталану çулĕ çине тăнă вăхăт пулнă вăл самана. Çĕр ĕçĕнче те унччен пулман ĕç хутшăнăвĕсем вăй илсе пынă. Çаксене йăлтах Мишша ачаллах ăса илсе ӳсет. "Çирĕп те туслă коллективпа кăна пысăк ĕçсем тума пулнине пире пурнăç ачаран вĕрентрĕ. Ĕç ĕмĕрĕпех эпĕ ăна çирĕп никĕсре тытса пурăнтăм, юнашар ĕçлекенсенчен те çавнах ыйтрăм. Паян эсир ман патăма килни те эпир хăй вăхăтĕнче тĕрĕс ĕçлесе пурăннине, хамăртан кĕçĕнрех ăрăва тĕрĕс воспитани парса ӳстернине çирĕплетет тесе шутлатăп", – терĕ çулсем иртнине пăхмасăрах сăн-питрен савăк кулă тартман ĕçпе вăрçă ветеранĕ. Çавăнтах вăл ĕçрен ютшăнмасăр пурăнмалли, умри ĕçе чуна парса пурнăçламалли, юратса тунă ĕç кăна ĕмĕре тăсни тата çамрăклăха упрани пирки сăмахларĕ.

Виçĕ ачаллă çемьере хăй кĕçĕнни пулнă пулин те, Мишăн амăшĕн чĕрçи çинче ачашланса ларма вăхăт пулман. Çĕнĕлĕхсем вăй илнĕ вăхăтра çуралнă арçын ачан ачалăх çулĕсенчен пуçласа хăй çитĕннĕ май ĕç тĕлĕшĕпе те яваплăхĕ ӳссе пынă çеç. Çăкăр хакне ачаллах туйса илнĕ çамрăк 1943 çулта Тăван çĕр-шыва хӳтĕлеме фронта тухса каять. Тĕрлĕ çĕре çитерет ăна шăпа, пĕрре мар çапăçу хирĕнче вилĕмпе куçакуçăн тĕл пулать. Анчах малашлăхпа пурăннă çамрăк салтак пур йывăрлăха та тӳсĕмлĕ чăтса иртерет, орден-медальсене тивĕçет. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине Михаил Иванович Инçет Хĕвелтухăçĕнче самурайсене çапса аркатнипе вĕçлесе 1951 çулта тин тăван яла таврăнать. Киле çитнĕ-çитмен ĕнерхи фронтовик çанă таварса мирлĕ ĕçе кӳлĕнет. Кĕçех малашлăхпа пурăнакан каччă тăван ялти хĕрпе – Раиса Федоровнăпа – çемье çавăрать.

Пурнăçпа тан пырса техникăпа туслашма ĕлкĕрнĕ арçын экскаваторпа ĕçлессине алла илет. Тĕрлĕ çулсенче çул-йĕр тăвакан предприятире, Мăн Сĕнтĕрти ял хуçалăх техникин пĕрлешĕвĕнче вăй хурать. Çав вăхăтра Юнкăпуçĕнче хуçалăхсем хушшинчи "Моргаушская" строительство организацийĕ йĕркеленсен ыранхи кунпа пурăнакан арçын çывăхри предприятие экскаваторпа ĕçлеме вырнаçать те тивĕçлĕ канăва тухиччене х унта вăй хурать. Яваплăха туяканскерне предприяти ертӳçисем кĕçех йывăр машинăсемпе ĕçлекен механика вĕрентеççĕ, кăшт пурăнарахпа хăй суйласа илнĕ отрасльти производство пуçлăхĕнче ĕçлеме шанаççĕ.

– Кун иртнĕр тесе ĕçе тухман эпĕ. Çавăнпа хисеплетчĕç пулас ертӳçĕсемпе специалистсем. Вĕсем шута хунине çилпе вĕçтерес килместчĕ. Пĕрлехи ĕç планĕ пурнăçланасси хамран та килнине ăнланаттăм. Çапла вара пĕрре кӳлĕннĕ ĕçрен уйрăлмасăр сисĕнмесĕрех 25 çул хыçа юлчĕ, – каласа парать Михаил Иванович. Вăрçă хыççăнхи çулсенче Тăван çĕр-шыв юхăнчăкран ура çине çирĕппĕн тăнă вăхăтра чĕрĕк ĕмĕр стройкăра. Районти вуншар-çĕршер объект ĕçе кĕнĕ вăл çулсенче. Вĕсенчен кашнийĕнче майлах М. Хошкин экскаваторщикăн тӳпи те пур. Тивĕçлĕ канăва тухсан вăл темиçе çул ял старостинче вăй хунине те Юнкăра пурăнакансем ырăпа çеç аса илеççĕ.

Пĕр ĕçе тепринчен уйăрман, йывăр-çăмăл пайламан механизатор тăтăшах шыравра пулнă. Пурнăçа юратса пурăннăскер мăшăрĕпе пĕрле çирĕп килти хушма хуçалăх тытса пынă. Хăйсем хыççăн ырă йĕр хăварса вĕсем ывăлпа икĕ хĕр çуратса ĕçе юратма вĕрентсе ӳстернĕ, кашнинех аслă пĕлӳ панă, пурнăçра вырăн тупма пулăшнă. Виçĕ çул каялла мăшăрĕ пурнăçран уйрăлнă хыççăн ĕçпе вăрçă ветеранĕ паян вăталăх хĕрĕпе – Маргарита Михайловнăпа – пурăнать, килти хушма хуçалăха çирĕп тытса пыма пулăшать. 87 çулхи асатте 5 çул каялла çеç пыл хурчĕсемпе, кăçал ĕнепе сыв пуллашни унăн ĕçченлĕхне çирĕплетет кăна. Ашшĕпе хĕрĕ паян килти хушма хуçалăхра сысна, йышлă кайăк-кĕшĕк тытаççĕ, тухăçлă пахча çимĕç ӳстереççĕ, тăрăшулăхĕпе ялта пурăнакансемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăраççĕ.

– Атте пире çамрăкла вĕренме хистетчĕ. Çамрăкла вĕренни – чул çинче, тетчĕ. Аслă сĕнӳсем нумай паратчĕ пулсан та хамăра вăрçнине астумастăп. Халăх ăсĕпе усă курса ĕçлеме вĕрентни вара паян та асрах. Çулĕсем пуртан паян пур ĕçе те ĕçлеймест вăл, ĕçлеттерместĕп те. Анчах атте пур ĕçе те пăхса тăма ĕлкĕрни мана паян та тĕлĕнтерет, – терĕ хĕрĕ ашшĕ хăй лартнă пӳрт-çурт таврашĕнчи тирпейлĕхе паян та çирĕп пăхса тăнине палăртса.

М. Хошкин патĕнчен эпир Юнкă ял тăрăхĕ хăйсен енчи ветерансемпе йĕркеленĕ тĕл пулăва çитрĕмĕр. Аслисене тивĕçлĕ чыслани кунта кашни утăмрах палăрчĕ. Çакна палăртса хăвармалла. Юнкă ял тăрăхĕнчи ветерансен пысăк пайĕ хăй вăхăтĕнче "Моргаушская" МСО" хупă акционерлă обществăра вăй хунă. Çавăнпа та обществăн генеральнăй директорĕ В. Семенов çак кун хăйсем патĕнче тĕрлĕ çулсенче ĕçленĕ ветерансене уйрăммăн чысласси не те сиктерсе хăвармарĕ.

– Пĕччен пурнăçламалли ĕç мар çакă. Аслă ăрурисене тивĕçлĕ тав сăмахĕ калама пулăшнăшăн эпĕ паян Олег Аргандеевăн хресчен (фермер) хуçалăхне, "Агрико" чикĕллĕ яваплăхлă обществăна, хуçалăхсем хушшинчи "Моргаушская" строительство организацине, "Юнга" чикĕллĕ яваплăхлă обществăна, А. Моторкинăпа Н. Маряшкина тата Ю. Васюхин индивидуаллă предпринимательсене, Юнкăри вăтам шкула, вырăнти культура ĕçченĕсене тав сăмахĕ калатăп. Çак туслă çыхăну пирĕн малашне те татăлмасса шанатăп, – терĕ хăйĕн сăмахĕнче Юнкă ял тăрăхĕн пуçлăхĕ В. Фомин.

...Залра ларакан ватăсене çамрăксем саламлани çине çулсен çӳллĕшĕнчен пăхрăм. Ĕç ветеранĕсенчен ытларахăшĕ – Аслă вăрçă çулĕсен ачисем. Çити-çитми пурнăç та, выçлăх та, ачаллах çĕр ĕçне кӳлĕнни те, йывăрлăхсене пăхмасăрах çăпата сырса пĕлӳ çулĕпе утни те, çутă малашлăха шанса ачасем çуратса ӳстерни те, халăх хуçалăхне аталантарма çĕнĕ объектсем çĕклени те – йăлтах вĕсен шăпи, Тăван çĕр-шывăн йывăрлăхран пĕрле тухнă çулĕсенчи шăпи, район шăпи. Вĕсем паян пурте тачă çыхăнура.

### МĔН ТУНИПЕ ЛĂПЛАНМАÇÇĔ

Кăçал 55 çул тултарнă "Моргаушское" строительство организацийĕн паянхи тĕп тĕллевĕ – "Çын туянма пултаракан хăтлă çурт-йĕр" программăна туллин пурнăçласси. Кунта ĕçлекенсем ялсен инфраструктурине аталантарассинче, вĕсен социаллă пурнăçне лайăхлатассинче тăрăшулăхпа палăраççĕ. Çавăнпах хупă акционер обществинче вăй хунă тата паян та кунта ĕçлекенсенчен нумайăшĕ район, республика, Раççей шайĕнчи Хисеп хучĕсене, медаль-орденсене тивĕçнĕ. Вĕсем хушшинче "Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ строителĕ" ята илнисем те пур. Вĕсен ырă тĕслĕхĕпе паянхи ĕçченсен тăрăшулăхĕ тата хваттер илекен çынсен пурнăç шайĕ çĕнĕ ӳсĕме çĕкленни строительсене çĕнĕлĕхсене алла илсе вăй хума ыйтать. Кунта çапла тăваççĕ те. Акă кăçал çуркунне никĕс янă 5 хутлă 40 хваттерлĕ çурта тăвас ĕçсем иртнĕ кунсенче вĕçленчĕç. Кунта паян хăт кĕртессипе ĕçлеççĕ.

– Пурнăç аталанăвĕпе тан пырса эпир район центрĕнче пилĕк хутлă нумай хваттерлĕ пурăнмалли çуртсем тăвассине алла илтĕмĕр. Хваттерсенче çынсене кăмăллă та хăтлă пултăр тесе хваттерсен çĕнĕ калăпăшĕпе ĕçлеме пуçларăмăр. Ку вăл çынсен пурнăç условийĕсене тата райцентр сăнне тĕпрен улăштарма пулăшать. Çакăнпа пĕрлех пирĕн организаци аслă ăрурисене пулăшма та яланах хатĕр. Эсир хăвăр çулсем иртнипе пуçăрсене ан усăр. Турра ĕненнипе, вăл пулăшнипе сирĕн пурăнас çулăрсем татах вăрăм килччĕр. "Моргаушская" МСО" хупă акционер обществи вара пурăнать, малалла пăхса ĕçлет, хăйĕнпе ĕçлекенсене шанчăк çеç кӳрет. Çакна валли пирĕн туслă команда йĕркеленсе çитнĕ. Пĕрлехи тăрăшулăхпа ырра шанса паян çĕнĕрен çĕнĕ çурт-йĕр çĕклетпĕр, – терĕ Владислав Николаевич ветерансемпе йĕркеленĕ тĕл пулăва хупнă май.

**А. БЕЛОВ.**



Муркашра çĕкленнĕ пилĕк хутлă нумай хваттерлĕ пурăнмалли çурт – "Моргаушская" строительство организацийĕн черетлĕ аталану утăмĕ.




Владислав Николаевича хăйсен предприятийĕнче нумай çул ĕçленĕ (сăн ӳкерчĕкре сулахайран сылтăмалла) Вера Егоровна Лазаревăпа, Раиса Михайловна Хораськинăпа, Нина Исаковна Суворовăпа, Раиса Лукинична Яндимиркинăпа куратăр. "Çемьери пек пурăнни çĕнĕ тĕллев çуратать", – терĕç вĕсем уяв кăмăллă иртнишĕн савăнса.

**ИЗВЕЩЕНИЕ О ПРОВЕДЕНИИ АУКЦИОНА НА ПРАВО ЗАКЛЮЧЕНИЯ ДОГОВОРА КУПЛИ-ПРОДАЖИ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ**

Кадикасинское сельское поселение Моргаушского района Чувашской Республики (далее – организатор аукциона) приглашает принять участие в аукционе, открытом по составу участников и по форме подачи предложений о цене, на право купли-продажи (далее – аукцион) земельных участков, расположенных на территории Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики.

Основание: постановление администрации Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики от 08.10.2014 г. №154 "О проведении открытого аукциона на право купли-продажи земельных участков, расположенных на территории Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики"

Почтовый адрес, номер контактного телефона, адрес официального сайта организатора аукциона и комиссии по проведению аукциона: 429541, Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Кораккасы, ул. Новая, д.1, телефон: 8(83541)65-3-01, e-mail: mrgkadik_pos@cbx.ru

**Характеристика объектов купли-продажи:**

**Лот №1** – земельный участок с кадастровым номером 21:17:072501:2527, категории "земли населенных пунктов", местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, земельный участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:072501, для индивидуального жилищного строительства, площадью 1332 кв. м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка – 222000 (двести двадцать две тысячи) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (44000 руб. 00 коп.).

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (11100 руб. 00 коп.).

**Лот №2** – земельный участок с кадастровым номером 21:17:072501:2528, категории "земли населенных пунктов", местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, земельный участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:072501, для индивидуального жилищного строительства, площадью 1201 кв. м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка – 201000 (двести одна тысяча) рублей.

Сумма задатка – 20 % от начальной (стартовой аукционной) цены участка (40200 руб. 00 коп.).

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (10050 руб. 00 коп.).

**Лот №3** – земельный участок с кадастровым номером 21:17:072501:2529, категории "земли населенных пунктов", местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, земельный участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:072501, для индивидуального жилищного строительства, площадью 1200 кв. м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка – 201000 (двести одна тысяча) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (40200 руб. 00 коп.).

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (10050 руб. 00 коп.).

**Лот №4** – земельный участок с кадастровым номером 21:17:072501:2530, категории "земли населенных пунктов", местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, земельный участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:072501, для индивидуального жилищного строительства, площадью 1200 кв. м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка – 201000 (двести одна тысяча) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (40200 руб. 00 коп.).

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (10050 руб. 00 коп.).

**Лот №5** – земельный участок с кадастровым номером 21:17:072501:2531, категории "земли населенных пунктов", местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, земельный участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:072501, для индивидуального жилищного строительства, площадью 1200 кв. м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка – 201000 (двести одна тысяча) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (40200 руб. 00 коп.).

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (10050 руб. 00 коп.).

**Лот №6** – земельный участок с кадастровым номером 21:17:072501:2532, категории "земли населенных пунктов", местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, земельный участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:072501, для индивидуального жилищного строительства, площадью 1200 кв. м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка – 201000 (двести одна тысяча) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (40200 руб. 00 коп.).

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (10050 руб. 00 коп.).

**Лот №7** – земельный участок с кадастровым номером 21:17:072501:2534, категории "земли населенных пунктов", местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, земельный участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:072501, для индивидуального жилищного строительства, площадью 1200 кв. м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка – 201000 (двести одна тысяча) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (40200 руб. 00 коп.).

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (10050 руб. 00 коп)

**Лот №8** – земельный участок с кадастровым номером 21:17:072501:2538, категории "земли населенных пунктов", местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, земельный участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:072501, для индивидуального жилищного строительства, площадью 1285 кв. м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка – 215000 (двести пятнадцать тысяч) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (43000 руб. 00 коп.).

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (10750 руб. 00 коп)

**Лот №9** – земельный участок с кадастровым номером 21:17:072501:2535, категории "земли населенных пунктов", местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, земельный участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:072501, для индивидуального жилищного строительства, площадью 1200 кв. м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка – 201000 (двести одна тысяча) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (40200 руб. 00 коп.).

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (10050 руб. 00 коп

**Лот №10** – земельный участок с кадастровым номером 21:17:072501:2539, категории "земли населенных пунктов", местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, земельный участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:072501, для индивидуального жилищного строительства, площадью 1200 кв. м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка – 201000 (двести одна тысяча) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (40200 руб. 00 коп.).

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (10050 руб. 00 коп)

**Лот №11** – земельный участок с кадастровым номером 21:17:072501:2536, категории "земли населенных пунктов", местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, земельный участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:072501, для индивидуального жилищного строительства, площадью 1201 кв. м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка – 201000 (двести одна тысяча) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (40200 руб. 00 коп.).

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (10050 руб. 00 коп)

**Лот №12** – земельный участок с кадастровым номером 21:17:072501:2518, категории "земли населенных пунктов", местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, земельный участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:072501, для индивидуального жилищного строительства, площадью 1200 кв. м.

